

# Аслӑ ӑру – ҫамрӑксемшӗн тӗслӗх

Проект Чӑваш Республикин Цифра аталанӑвӗн, информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерствин пулӑшӑвӗпе пичетленет. Авторӗ – Елена Порфирьева

## Красновсем 65 ҫул пӗрле

**Ырӑ йӑла – ҫемье юбилейӗсене анлӑн паллӑ тӑвасси. Пӗрле килӗштерсе нумай ҫул шӑкӑл-шӑкӑл пурӑнакан мӑшӑрсене округ, республика шайӗнче те чыслаҫҫӗ. Влаҫ тытӑмӗнче ӗҫлекенсем хисеплесе ӑшӑ сӑмахсем калаҫҫӗ, парнесем кӳреҫҫӗ.**

Акӑ, Уравӑш ялӗнчи Анфиса Климентьевнӑпа Анатолий Васильевич Красновсем 65 ҫул пӗрле пурӑннине паллӑ турӗҫ. Тимӗр туйпа вӗсене округ пуҫлӑхӗн заместителӗ Алексей Фирсов кӑмӑлтан саламланӑ, ҫирӗп сывлӑх, иксӗлми вӑйхал суннӑ. Ҫамрӑк ҫемьесемшӗн паха тӗслӗх пулнине палӑртнӑ.

Красновсем ял-йышра хисеплӗ. Ӗмӗр тӑршшӗпех юратнӑ ӗҫсенче тӑрӑшса тивӗҫлӗ канӑва тухнӑ. Пысӑк тӑрӑшулӑхпа, хастарлӑхпа палӑрса тӑнӑ. Пурнӑҫри йывӑрлӑхсенчен нихӑҫан та хӑраман. Пӗрпӗрне ӑнланни вӑй-хӑват парать, теҫҫӗ Анфиса Климентьевнӑпа Анатолий Васильевич. Хурлӑхне мӑшӑр пӗрле ҫӗннӗ, савӑнӑҫне те икке пайланӑ. Пилӗк ачана тӗрӗстӗкел пӑхса ҫитӗнтернӗ, пурнӑҫӑн тӳрӗ ҫулӗ ҫине тӑма пулӑшнӑ.

Ҫулсем иртсен те хӑйсене вӑрвар тытаҫҫӗ, ҫивӗч ӑс-тӑнлӑ. Килҫуртӗнче тасалӑх хуҫаланать. Халӗ ветерансен 11 мӑнук, 10 кӗҫӗн мӑнук. Ҫу кунӗсенче Красновсен пӳрчӗ хаваслӑ шӑв-шавпа тулать. Хастар та патвар йӑха тӑсакансене курсан ватӑсен чӗри савӑнӑҫпа тулать, кӑмӑлӗ уҫӑлать. Вӗсем мӑнукӗсемпе кӗҫӗн мӑнукӗсене апатҫимӗҫпе сӑйлама юрataҫҫӗ. Ҫамрӑк ӑрӑва пӗчӗкренех ӗҫе вӗрентме тӑрӑшаҫҫӗ.

65 ҫул пӗрле шӑкӑл-шӑкӑл пурӑнакан хисеплӗ мӑшӑра сывӑх тӑванӗсем те, пӗлӗшӗ-хурӑнташӗ те саламланӑ.

Тимӗр туй – тӗлӗнмелле тапхӑр. Кашни мӑшӑрах нумай ҫул туйӑмсене упраса пурӑнаймасть. Сумлӑ юбилей ҫемье ҫирӗплӗхне кӑтартать.



Тимӗр туйпа саламлаҫҫӗ.

**Елена ТОЛСТОВА**

## Тӑвансемпе мӑнаҫланатӑп

**Аслӑ Ҫӗнтерӗве ҫывхартма пирӗн йӑх-несӗлӗмӗрсем те хутшӑннӑ. Хӑйсен пурнӑҫне шеллемесӗр тӑшмана хирӗҫ ҫапӑҫнӑ. Вӗсем пирки хаҫат вулаканӗсене каласа кӑтартасшӑн.**



П.Слышев.

Мӑн асаттен ашшӗ **Павел Макарович Слышев** 1908 ҫулта Хирпуҫӗнче ҫуралнӑ. Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫине 1942 ҫулта кайнӑ. Шел пулин те, вутҫулӑм витӗр чӗрӗ тухайман. Вӑл пӗрремӗш ҫапӑҫурах Ростов патӗнче пуҫне хунӑ. Павел Макаровича Ростов облаҫӗнчи «Пролетарская» чукун ҫулӗ ҫывӑхӗнче пытарнӑ. Ҫапӑҫӑва кӗриччен пӗртен-пӗр ҫыру киле яма ӗлкӗрнӗ. Мӑн асатте ашшӗн виҫӗ ача тӑрса юлнӑ.

Тепӗр тӑван та **Павел Егорович Печников** Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫинче пулнӑ. Вӑл 1911 ҫулхи раштав уйӑхӗн 12-мӗшӗнче Хирпуҫӗнче ҫуралнӑ. Саратов патӗнче ҫапӑҫнӑ. «Катюша» ракетӑна снарядсемпе авӑрланӑ. Фронтра йывӑр аманнӑ, Томскри госпитальте сипленнӗ. Паттӑр салтак вӑрҫӑ хыҫҫӑн тӑван яла таврӑннӑ. Вӑл хуҫалӑхра агрономра, экономистра тата председательте ӗҫленӗ. Ҫемье ҫавӑрса мӑшӑрӗпе пилӗк ача пӑхса ҫитӗнтернӗ.



П.Печников.

Ытти тӑвансем та вӑрҫӑра хӑюлӑхпа палӑрнӑ. Акӑ, **Андрей Гаврилович Гаврилов** Аслӑ Ҫӗнтерӗве Хӗвелтухӑҫ Пруссинче кӗтсе илнӗ. Демобилизаци хыҫҫӑн тӑван ялне – Хирпуҫне – таврӑннӑ. Мӑшӑрӗпе Александра Павловнӑпа ултӑ ача пӑхса ҫитӗнтернӗ. Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫинче хӑюлӑх кӑтартнӑшӑн чылай наградӑна тивӗҫнӗ. Шел те, унӑн пиччӗшӗн **Александр Гаврилович Гавриловӑн** пурнӑҫӗ питӗ кӗске пулнӑ. Ӑна ҫемье ҫавӑрса ачапча ӳстерме пӳрмен. 18 ҫулти каччӑ 1943 ҫулхи пуш уйӑхӗн 10-мӗшӗнче Ленинград (халӗ – Санкт-Петербург) патӗнчи хаяр ҫапӑҫура пуҫне хунӑ.

Кашни паттӑрӑн ырӑ ятне чӗрере упратӑп. Манӑн Тӑван ҫӗршыва юрӑхлӑ ҫын пулса ҫитӗнес килет.



А.Гаврилов.

**Алексей НИКОЛАЕВ,**
**Вӑрнарти**
**2-мӗш вӑтам шкул**

## Ӑрусен ҫыхӑнӑвӗ хаклӑ

**Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗн Владимир Путинӑн указӗпе 2025 ҫула Ҫӗршыв хӳтӗлевҫин ҫулталӑкӗ тесе ҫирӗплетнӗ, Чӑваш Республикин Пуҫлӑхӗ Олег Николаев Ҫӗнтерӳ тата патриотизм ҫулталӑкӗ тесе палӑртнӑ.**




Упнер территори пайӗнче пурӑнакансем ентешӗсен паттӑрлӑхне ӗмӗрлӗх астӑваҫҫӗ.

Ҫавӑнпа та территори пайӗсен администрацийӗсем Акатуйра «Ял тӑрӑхӗсен чи лайӑх картишӗ» конкурсра тӗп темӑна анлӑн ҫутатма тӑрӑшни палӑрчӗ.

Комисси пӗтӗмлетӗвӗ тӑрӑх, Упнер территори пайӗ мала тухрӗ. Пӗрлехи вӑйпа хастарсем чи илӗртӳллӗ картиш йӗркелеме пултарчӗҫ.

Наградӑсен стенчӗсене курсан ятлӑ-сумлӑ хӑнасем те Тӑван ҫӗршыв историйӗн мӑнаҫлӑ тапхӑрӗсене аса илчӗҫ. Упнер территори пайӗн пуҫлӑхӗ Геннадий Арбузов паттӑрсене чысласа ӑшӑ сӑмахсем каларӗ.

Раҫҫейӗн хальхи салтакӗсемпе офицерӗсене те, хӑйсен пурнӑҫне Тӑван ҫӗршыва тата унӑн интересӗсемпе хӑрушсӑрлӑхне хӳтӗлес ӗҫе халалланисене, мухтав. Акӑ, Анаткас Хапӑсри Волковсен тӗрлӗ ӑрӑвӗ ҫӗршыв умӗнчи таса тивӗҫе чыслӑн пурнӑҫласа, нацистсемпе кӗрешсе ырӑ ят-сума тивӗҫнӗ. Упнер территори пайӗн картишӗнче патриотизмпа тулӑх кӗнекесен куравӗ те куракансемшӗн кӑсӑклӑ пулчӗ. Геннадий Арбузов пуҫлӑх, администрацире тӑрӑшакан Надежда Шляпкина, Надежда Змеева, Евгений Михайлов, Анаткас Хапӑс кинӗ, педиатрта ӗҫлекен Яна Арбузова тата Хапӑсри вӑтам шкулта нумай ҫул ҫамрӑк ӑрӑва пӗлӳ панӑ Александра Ермошкина картиш экспозицине илемлетме хастар хутшӑннӑ. Тӑван ҫӗршыва хӳтӗлекенсен тӗрлӗ ӑрӑвӗсен паттӑрлӑхне мирлӗ тӳпе айӗнче пурӑнакансен яланах асра тытмалла.

Иккӗмӗшпе виҫҫӗмӗш вырӑнсенче – Калинино тата Ҫавалкас территори пайӗсем. Вӗсен картишӗсем те куракансене кӑсӑклантарчӗҫ. Ӑрусен ҫыхӑнӑвӗ ҫирӗп пулнине ҫирӗплетрӗҫ. Ҫак ӗҫ – паянхи ҫамрӑксемшӗн патриотла воспитанин чӑн-чӑн тӗслӗхӗ.

**Екатерина ГРИГОРЬЕВА**